19-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
АВГУСТ
22
ШАМАТКУН
196 (6131) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланас умĕн

Кăçал пирĕн учительсемпе шкул ачисем çуллахи каникулра колхозсемпе совхозсен уйхирĕсенче ĕçлеççĕ. Ялхуçалăхĕнче ĕçлеме вĕреннĕ ачасем жнейкăсемпе, молотилкăсемпе, тракторсемпе, комбайнсемпе ĕçлеççĕ, ялхуçалăх машинисене юсаççĕ. Шкул ачисем нумайĕшĕ алăпа тырă выраççĕ, пучах пуçтараççĕ, çĕмелсем тăваççĕ. Кунсăр пуçне тата шкул ачисем предприятисенче, вăрман касса вутă хатĕрленĕ, торф кăларнă çĕрте ĕçлеççĕ, тимĕр-тăмăр пухаççĕ, фронтовиксен ачисене, куçса килнĕ ачасене пулăшаççĕ. Пионерсем хушшинче тимурла движени анлăрах та анлăрах сарăлса пырать. Учительсем тата аслă классенче вĕренекен ачасем чылайĕшĕ агитаторсем пулса ĕçлеççĕ. Ĕçсыннисем хушшинче хаçатсем вуласа параççĕ, политикăллă калаçусем ирттереççĕ, стена хаçачĕсем кăлараççĕ.

Учительсемпе вĕренекенсен шкулсене пухăнас вăхăт çывхарса килет. Сентябрĕн 1-мĕшĕнче пуçламĕш (1—IV-мĕш) классенче вĕренекенсем парттăсем хушшине лараççĕ, аслă (V—X-мĕш) классенче вĕренекенсен октябрĕн 1-мĕшĕнче вĕренме тытăнмалла. Çапла вара, çывăх кунсенчех вĕренӳ çулĕ пуçланать.

Чылай шкулсем çĕнĕ вĕренӳ çулне кĕме хатĕрленнĕ. Шкул çуртне юсаттарнă. Вутă турттарса хунă. Ачасем учебниксем туяннă. Ăçта шкул директорĕ тăрăшса ĕçлет, унта ку енĕпе результатсем лайăх. Анчах хăшпĕр шкулсен директорĕсемпе заведующийĕсем вара вĕренӳ çулне кĕме хатĕрленес ĕçре ответлăха туймаççĕ. Шупашкар районĕнчи Çатра-Лапсарти тулллинмар вăтам шкулăн директорĕ пулма Иванов юлташа уйăрса лартнăранпа [illegible] иртнĕ. [illegible] вăл шкула пырса та курман.

Шкулсен çурчĕсене юсас ĕçе [illegible]. Анчах [illegible] Шăмăршă районĕнчи Чепкас-Никольскинчи [illegible] вăтам шкул [illegible] Первомайскинчи [illegible].

[illegible] Пăрачкав районĕнче 4848 кубометр вутă хатĕрлемелле пулсан, 3938 кубометр хатĕрленĕ, 2113 кубометр турттарса хунă, Красноармейски районра 3.000 кубометр хатĕрлемелле—2000 кубометр хатĕрленĕ, Советски районра 3974 кубометр хатĕрлемелле пулсан, паянхи куна 3.000 кубометр касса хатĕрленĕ. Çав вăхăтрах ку ĕç нумай районсенче çителĕксĕр пулса пырать. Елчĕк районĕ (çутĕç пайĕн заведующийĕ Г. Степанов) 5.860 кубометр хатĕрлес вырăнне—1191 кубометр, Шупашкар районĕ (çутĕç пайĕн заведующийĕ Петрова) 4.000 кубометр вырăнне—1.218 кубометр, Первомайски район 4000 кубометр вырăнне—1570 кубометр кăна хатĕрленĕ. Тырă вырма тухиччен шкулсем валли вутă хатĕрлесе турттарса хума çак районсен условисем çителĕклĕ пулнă. Анчах ку районсенчи çутĕç пайĕсен заведующийĕсемпе ялсоветсен исполкомĕсем шкулсене валли вутă хатĕрлес ĕçе организацилеме тăрăшман.

Иртнĕ вĕренӳ çулĕ вĕçленнĕренпе шкул ачисем нумайĕшĕ çĕнĕ класра вĕренме учебниксем туянчĕç. Комсомольски районри шкул ачисем 13 пин, Шăмăршă районĕнче—15 пин ытла учебниксем илнĕ. Çав вăхăтрах Чкаловски, Первомайски районсенче учебниксем нумай çитмеççĕ-ха. Чăвашсоюз тата ялти кооперативсем вĕренекенсем валли кĕнеке илсе пырас ĕçе хакламаççĕ. Çавна пула пĕр районри лавкасенче учебниксем нумай, тепĕр районрисенче пĕртте çук.

Учебниксемсĕр пуçне шкул ачисем валли ручкăсем, линейкăсем, ещĕксем, чернила, пур кирлĕ. Ку хатĕрсене вырăнти предприятисемпе мастерскойсенче туса хатĕрлеме пулать. Анчах ЧАССР Вырăнти промышленность Халăх Комиссариачĕпе Промсоюз шкул ачисене кирлĕ япаласем тăвас ĕçе паянхи кунччен те йĕркелесе яман. Унтан та ытларах, вĕсем çак ĕçрен пăрăнма хăтланаççĕ. Шкул ачисем валли 125 пин линейка, 180 ручка, 115 пин ещĕк тата ытти хатĕрсене те тăвас пулать. Вырăнти промышленность Халăх Комиссариачĕ енĕпе вара кăçал пĕр пин линейка, пилĕк пин ещĕк, 50 пин ручка тума кăна палăртнă. Çак япаласене тума кирли çинчен Вырăнти промышленность Халăх Комиссариачĕ при-[illegible]

[illegible] Шкул ачисем çар ĕçне лайăх пĕлчĕр, тăшмана хирĕç çапăçнă çĕрте кирлĕ пĕлӳсене туянччăр.

Кашни шкултах ачасем валли вĕри апат пулмалла. Иртнĕ çулта хăшпĕр шкулсенче ачасене апатлантарас ĕçе ячĕшĕн кăна туса пынă. Çакна шута илсе, кăçал шкул ачисене вĕри апат çитерес ĕçе организацилесси çине ытларах çаврăнса пăхас пулать.

Партипе совет организацийĕсем, учительсем тата ачасен ашшĕ-амăшĕсем активлăн ĕçе хутшăнсан çеç шкулсене çĕнĕ вĕренӳ çулне кĕме пур енчен те хатĕрлесе çитерме пулать.

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту

Депори паллă стахановецсем

КАНАШ, августăн 21-мĕш. (Телефонпа). Железнодорожниксен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕнче Хусан чугунçулĕн Канаш деповĕнчи машинистсем лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ. Леонид Николаевпа Петр Лаптев машинистсем йывăр тиенĕ поездсене нормăпа пăхнинчен хăвăртрах илсе çӳреççĕ. Фронта тата халăх хуçалăхне кирлĕ грузсене вырăна вăхăтра çитерсе тăраççĕ. Унпа пĕрлех вĕсем топливăна сахал мар перекетлеççĕ.

Пирĕн правительство вĕсен пархатарлă ĕçне тивĕçлипе хакларĕ: Николаев юлташа «Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав» орденĕпе, Лаптев юлташа «Знак почета» орденĕпе наградăларĕ.

Машинистсем, вĕсен помощникĕсем, кочегарсем хăйсен паровозĕсене хĕле кĕме хăйсен вăйĕпе хатĕрлес задача лартрĕç. Вĕсем вăрçă вăхăтĕнче пур ĕçре те тата пурне те перекетлеме кирлине лайăх ăнланаççĕ, паровозсене юсас ĕçре вырăнти материалсемпе усă курма тăрăшаççĕ. Тимофеев, Харитонов, Николаев тата Казачок машинистсем паровоз алăкĕсемпе урайĕсене ăшă тытмалла тăваççĕ.

Депо дежурнăйĕ Павлов юлташ, машинистсем Железняк, Каляганов тата Клинов юлташсем те вăрçă вăхăтĕнчи пек ĕçлеççĕ. Вĕсен ĕçĕнче пĕр чăрмав та, пĕр кăлтăк та çук.

Икĕ нормăран кая мар,—çакăн пек депори слесарьсен лозунгĕ. Золотухин, Конев, Чеботарев слесарьсем кирек мĕнле ĕçре те нормăна 2 хут ирттерсе тултараççĕ. Электросварщик-комсомолец Жигунов юлташ та вĕсенчен юлмасть.

А. СЕРГЕЕВ.

Çĕршывпа фронт валли вăрман

ВĂРНАР, августăн 21-мĕш. (Телефонпа). Вăрманта ĕçлекенсем умĕнче ответлă задача тăрать—фронтпа халăх хуçалăхне кирлĕ йывăç материалсене вăхăтра тата çителĕклĕ хатĕрлесе памалла. Çак задачăна ăнăçлăн пурнăçлас тесе Вăрнар леспромхозĕнче ĕçлекенсем социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç, хăйсем çине татăклă обязательствăсем илчĕç. Кашни участок, бригада тата работник ăмăртса ĕçлени лайăх результатсем парать. Суднăсем тума кирлĕ йывăçа хатĕрлес задание срокран чылай малтан пурнăçларăмăр. Халĕ леспромхоз вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе хĕрӳллĕн ĕçлет. Касас тата турттарас енĕпе республикăра иккĕмĕш вырăна тухрĕ.

Леспромхозри пункгсенчен Çаракл вăрман пункчĕ малта пырать. Вăл иккĕмĕш кварталти тата июль уйăхĕнчи плансене хатĕрлес енĕпе 132 процент, турттарас енĕпе 100 процент тултарчĕ. Вăрнар пункчĕ те плана ытлашшипех тултарать.

Пĕр-перинпе ăмăртăва тухнă хыççăн бригадăсен ĕç тухăçлăхĕ палăрмаллах ӳсрĕ. Хатĕрлес нормăна Крылова юлташ бригади 184 процент, Христофоров юлташ бригади 173 процент, Осипова юлташ бригади 164 процент тултараççĕ. Хĕрарăмсен Салмина юлташ ертсе пыракан бригади те нормăран тухăçлăрах ĕçлет. Е. Владимиров, У. Варламова возчиксем турттармалли нормăна ытлашшипех тултараççĕ.

В. КУПЦОВ,
Леспромхоз директорĕн заместителĕ.

Пирĕн аттесем, пиччесемпе упăшкасем хăйсен пурнăçне шеллемесĕр тăшмана хирĕç кĕрешеççĕ. Уборкăра лайăх ĕçлесе, фашистсене çĕмĕрсе тăкма хамăрăн тăвансене пулăшар!

Сăмах патăн—ăна пурнăçа кĕрт

Комбайнер Петр Маркиянов илнĕ обязательствăсене лайăх пурнăçлать

ИЕПРЕÇ, августăн 21-мĕш. (Телефонпа). Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса илнĕ обязательствăсене МТС-ри чылай тракторисчĕсемпе комбайнерĕсем чыслăн пурнăçласа пыраççĕ. МТС-ăн кăçал комбайнăсемпе 1.300 гектар тырă вырма пулсан, ĕнерхи кун тĕлне 1.065 гектар выраса пухнă, çакă вăл комбайнăсемпе тырă вырас плана 81,7 процент тултарни пулать.

Комбайнерсем уйрăмах П. Маркиянов, А. Сергеев юлташсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Комбайнер-коммунист Маркиянов юлташ паянхи кун тĕлне комбайнпа 196 гектар выраса плана 178 процент тултарнă. Ăна çавăншăн МТС директорĕпе политотделăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне панă.

Маркиянов юлташ пĕр вăхăтрах комбайнер тата трактор бригадин бригадирĕ пулса ĕçлет. Вăл, хăй тухăçлăн ĕçлесе, бригада членĕсене çĕнĕ çĕнтерӳсем тума хавхалантарать. Çавăнпа Маркиянов юлташ ертсе пыракан 7-мĕш трактор бригади пур ĕçре те малта пырать. Бригадăра ĕç дисциплини çирĕп, политикăллă-массăллă ĕçе аван йĕркеленĕ, учетчик И. Тимофеев юлташ тăтăшах «Мотор» ятлă стена хаçачĕ кăларса тăрать.

6-мĕш бригадăри комбайнер А. Сергеев, унăн помощникĕ комсомолец Н. Шерников юлташсем те илнĕ обязательствăна ирттерсе тултарчĕç. Комбайнпа 110 гектар тыррине пухса кĕмелле пулнă пулсан, вĕсем августăн 20-мĕшне 125 гектар тыррине вырса пухрĕç.

Çавăн пекех Ильина Атамов комбайнерсем те тухăçлăн ĕçлеççĕ, комбайна талăкра 16-шар сехетрен кая мар ĕçлеттереççĕ.

Анчах начар ĕçлекен комбайнерсем те пур-ха. 10-мĕш бригадăри комбайнер В. Тимофеев хăйĕн комбайнĕпе 10 кун хушшинче те 29 гектар çеç вырнă. Унăн комбайнĕ уборка пуçланнăранпа 112 сехет хушши ĕçлемесĕр ларнă. Çавăн пекех 11-мĕш трактор бригадинчи комбайнер П. Тимофеев та кăçал 33 гектар тыррине çеç выраса пухрĕ.

Д. МИХАЙЛОВ.

Хĕрсех çурхи тырăсене выратпăр

Районри колхозсен хирĕсенче кăçал [illegible] вăйлă тырпул çитĕннĕ. Ăна пухса, пĕр тăкмасăр, пирĕн тăван çĕршыва фронт валли ытларах тырпул тата ялхуçалăх продукчĕсем памалла. Çакна асра тытса, районри ялхуçалăх ĕçченĕсем кăçал ялхуçалăх ĕçĕсене [illegible] хăвăртлăхпа туса пыраççĕ. Халĕ вĕсем хĕрсех çурхи тырăсене выраççĕ, [illegible] çапаççĕ, кĕлтесене кĕрсе капана хываççĕ, кĕрхи тырăсене акаççĕ.

Паянхи кун тĕлне районри пур колхозсем çурхи тырăсене 11.125 гектар вырнă. Вăл шутран комбайнсемпе—841 гектар, машинăсемпе—2.159 гектар вырнă. 2.937 гектар кĕлтине кĕрсе капана хывнă. 2.210 гектар тыррине çапнă. Государствăна 1942 çулти обязательствăсен шучĕпе 3.185 центнер тырă панă. 4.026 гектар çине кĕрхи тырăсем акнă.

Малта пыракан колхозсем—Мичурин ячĕпе тăракан, «Трудовой путь», «Первое Мая», «Искра Ильича» т. ыт. колхозсем пур ĕçсене те организованно туса пыраççĕ. Вĕсем кĕрхи тырăсене 7—8 кун хушшинче вырса пĕтерчĕç, çак кунсенчех çурхи тырăсене вырас ĕçе вĕçлеççĕ.

«Смидович», «Красный Октябрь», «Пламя», Киров ячĕпе тăракан колхозсенче государствăна тырă леçме организациленĕ транспорт бригадисем лайăх ĕçлеççĕ. Асăннă колхозсем 1942 çулшăн государствăна тырă памалли обязательствăсене пĕтĕмпех пурнăçларĕç, халĕ Хĕрлĕ Çарăн фондне тума тырă турттараççĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем уйхирсенче фронтри пек ĕçлеççĕ. «Красное Сормово» колхоз членĕ И. Анто-ков машинăпа тырă вырать, вăл ĕç нормине кулленех 150—180 процент тултарать. Алăпа тырă выракансем М. Иванова, Л. Ильина, Е. Павлова, М. Табакова юлташсем 0,10 гектар вырăнне 0,20—0,25 гектар выраççĕ, ĕçе тĕплĕн тăваççĕ. «Комсомолец» колхоз членĕ, 80 çулти Капитолина Петрова [illegible] ĕçрен те юлмасть, ĕç нормине яланах ирттерсе тултарать. Комбайнер Антонов кулленех 15—22 гектар тырă пухса кĕртет.

Çапла уборкăри стахановецсемпе стахановкăсен йышĕ ӳссех пырать.

М. И. Калинин юлташ ялсовет председателĕсем патне янă çырăва ялсоветсемпе колхозсен председателĕсен тата агротехниксен районри канашлăвĕнче сӳтсе яврăмăр. Кун хыççăн районри пур колхозсенче те тăккаланчăкка хирĕç кĕрешес ĕç чылай лайăхланчĕ. «Майăн 1-мĕш» колхозра учитель И. Яковлев юлташ ертсе пынипе шкул ачисем 30 гектар çинче тăкăнса юлнă пучахсене пухрĕç. Мичурин ячĕпе тăракан колхозра та учительница Лантикова юлташ ертсе пыракан шкул ачисен бригади пучахсем пухас тĕлĕшпе лайăх ĕçлет.

Анчах Ямбулатри «Звезда», «Хĕрлĕ Çар», «Красное Сормово» колхозсенче ялхуçалăх ĕçĕсем кая юлса пыраççĕ-ха.

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса хамăр çине илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçлассишĕн, ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлессишĕн эпир вăйа хурса кĕрешетпĕр. Пирĕн çак задачăна пурнăçлама пур условисем те пур.

А. САЛМИН,
ВКП(б) Тăвай райкомĕн секретарĕ.

Кĕрхи тырăсене акса пĕтернĕ

КУКЕÇ, августăн 21-мĕш. (Телефонпа). Районри «Красная зарь», «Первомайск» тата Чкалов ячĕпе тăракан колхозсем кĕрхи тырăсене акас ĕçе вĕçлерĕç. Паянхи кун тĕлне районĕпе пурĕ 2.727 гектар çине кĕрхи тырăсем акнă. «Красный флот», «Красная заря», «Осоавиахим», «Строитель», «Котяковец», «Первое мая», Молотов ячĕпе тăракан колхозсенче тырăсене йăлтах машинăсемпе акаççĕ.

Ака ĕçĕсем уйрăмах «Шăнкас», «Строитель», Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозсенче пысăк çĕкленӳпе пулса пыраççĕ. «Шăнкас» колхозăн планпа 135 гектар акмалла, ĕнерхи кун тĕлне вăл 100 гектар акнă. Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз ыран кĕрхи тырăсене акас ĕçе вĕçлет.

Тула облаçĕнчи «Заря» ялхуçалăх артелĕн членĕсем чĕнсе калани çине ответлесе, кăçал районри пур колхозсем те кĕрхи тырăсене планран ирттерсе акса хăвараççĕ. «Первое мая» колхоз, тĕслĕхрен, планран ирттерсе 30 гектар, «Кормилец» — 22 гектар, «Культура», «Урожай», «Новый быт» — 20-шер гектар, «Осоавиахим» — 10 гектар акаççĕ.

Л. ДАНИЛОВ,
Райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ.

ПЛАНРАН ИРТТЕРСЕ АКАÇÇĔ

ШАХАСАН. (Хамăр корр.). Тăрăнти «Красный партизан» колхозра ялхуçалăх ĕçĕсем пысăк хăвăртлăхпа пулса пыраççĕ. Августăн 20-мĕш тĕлне колхоз çурхи тырăсене вырас, кĕрхи тырăсене акас ĕçсене вĕçлерĕ. Пурĕ 192 гектар çинчи çуртыррине вырнă, кĕрхи тырăсем 73 гектар çине акнă.

Кĕрхи тырăсене планран ирттерсе акса хăварма чĕнсе калані Тула облаçĕнчи «Заря» ялхуçалăх артелĕн пуçарăвне ырласа, колхоз ака планĕнчен ирттерсе 7 гектар çине ыраш акса хăварчĕ.

Колхозниксем халĕ хĕрсех кĕрхи тата çурхи тырăсене капана хывнă, кĕлте кӳнĕ çĕрте ĕçлеççĕ, авăн çапаççĕ. Августăн 20-мĕш тĕлне колхоз 70 гектар çинчи кĕлтене турттарса капана хывнă, 20 гектар тыррине çапнă. Уборкăра ĕç нормине 200—220 процент тултарса пынă П. Григорьева, П. Кириллова, И. Ильина колхозницăсем пур ĕçсенче те тухăçлăн ĕçлеççĕ.

С. ШАДИН.

Çурхи тырăсене вырса пĕтереççĕ

ЕТĔРНЕ, августăн 21-мĕш. (Телефонпа). Паянхи куна районри колхозсем пĕтĕмпе 8.327 гектар çинчи тырпулсене вырса пухнă, мĕнпур лаптăкăн 72 процентне вырнă.

Кĕçĕн Сĕнтĕрти «Вулкан» колхоз, çавăн пекех тата Кĕçĕн Хăмăркари колхоз та çурхи тырăсене вырса пĕтернĕ.

Уборкăра Мăн Шемертенри «Заветы Ильича» колхоз аван ĕçлет. Унăн председателĕнче ВКП(б) членĕн кандидачĕ Н. Мареев юлташ ĕçлет. Вăл председательте ĕçлеме уборка пуçланас умĕн кăна тытăннă. Çапах та вăл колхозри ĕçсене лайăх йĕркелесе янă. Çуртрисене сулнă çĕрте çак колхозра 80 çавăнта ĕçлеççĕ. Тепĕр икĕ кунтан колхоз çурхи тырăсене пĕтĕмпех пуçтарса кĕртет. Куллă кĕлтесене капана хывас ĕç те ăнăçлăн пулса пырать. Колхозăн 150 гектар çинчен тырпулсене пухса кĕртмелле пулсан, паянхи куна 110 гектар çинчи тырра капана хывнă та ĕнтĕ.

Г. СПИРИДОНОВ.
ВКП(б) Етĕрне райкомĕн секретарĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Августăн 20-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Августăн 20-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç **Клетскаяран** кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри, **Котельниковăран** çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районсенче, çавăн пекех тата **Пятигорскран** кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри, **Краснодартан** кăнтăртарахри вырăнсенче çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Пирĕн карапсем Хура тинĕсре противникăн 6 пин тонна водоизмещениллĕ транспортне путарнă.

* * *

Августăн 19-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 13 танкне, 35 бронемашинине, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 200 çити автомашинине, горючи тултарнă 10 автоцистернине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, полевой тата зенитнăй артиллерин 5 батарейине пусарса лартнă, противникăн пехотине 2 ротăна çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Клетская районĕнче пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç активлă çапăçусем туса пынă. Пĕр кун хушшинче гитлеровецсем темиçе хутчен те атакăсем туса пăхнă. Противникăн пур атакисене те, ăна пысăк çухатусем тӳстерсе, сирсе пăрахнă. Н-ски соединенин участокĕнче кăна нимĕçсен 13 танкне пĕтерсе тăкнă тата 250 ытла гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ. Клетскаяран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри вырăнта совет войскисем противникăн Дон урлă каçма хăтланакан пысăк вăйĕсене хирĕç хаяррăн çапăçнă. Вăйлă çапăçусенче пирĕн пехотинецсемпе танкистсем противникăн юханшыв урлă каçнă группине пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен 500 ытла салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Котельниковăран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районра хаяр çапăçусем пулса пынă. Совет войскисем противникăн наступлени туса пыракан танкĕсемпе мотопехотине хирĕç вăйлăн çапăçаççĕ. Пĕр чугунçул станци районĕнче уйрăмăнах хĕрӳллĕ çапăçусем пулса иртнĕ. Нимĕçсем малалла куçса пирĕн войскăсен боевой речĕсем хушшине саваллансa кĕрсе кайнă пулнă. Пирĕн боецсем контратака тунă та противника каялла сирсе пăрахнă, тăшмана пысăк çухатусем кӳнĕ. Çапăçу хирне гитлеровецсен вилнĕ салтакĕсемпе офицерĕсем çĕршер çын выртса юлнă. Нимĕçсен 20 танкне тата орудине, пулемечĕсене, автомашинисене нумай пĕтерсе тăкнă.

* * *

Краснодартан кăнтăртарахри районра пирĕн чаçсем противникăн пысăк вăйĕсене хирĕç оборонăллă çапăçусем туса пынă. Н-ски чаçри боецсем, питĕ кирлĕ рубежа хӳтĕлесе тăрса, гитлеровецсен 3 атакине сирсе пăрахнă. Нимĕçсен 5 танкне сиенленĕ тата 9 танкне, 9 орудине, 22 миномете пĕтерсе тăкнă, противникăн 700 çити салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем противникăн йышлăрах вăйĕсем хĕснĕ пирки çапăçусем туса пырса çĕнĕ позицисем патне чакнă.

Пятигорскран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри районра пĕр участокра нимĕçсем пысăк çухатусем тӳссе кăштах малалла куçма пултарнă. Пирĕн войскăсем тăракан вырăна сăрхăнса кĕнĕ противникăн автоматчикĕсене хирĕç вăйлă çапăçусем пыраççĕ.

* * *

Ленинград фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн чаçсем активлă çапăçусем туса пынă. Артиллерирен вăйлăн персе хатĕрленнĕ хыççăн Н-ски чаçри боецсем атака пуçласа янă. Тăшман вăйлăн хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса пирĕн боецсем юханшыв урлă каçнă та халăх пурăнакан пĕр пунктран гитлеровецсене хĕссе кăларнă. Халăх пурăнакан тепĕр пунктра урамсенчи çапăçусем пыраççĕ.

* * *

Ленинград облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенчен пĕринче Б. тата К. юлташсем командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕсем çак кунсенче халăх пурăнакан икĕ пунктра гитлеровецсен гарнизонĕсене çапса саланă. Партизансем 80 нимĕç оккупантне вĕлерсе пĕтернĕ тата трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Çапăçу хирĕнче нимĕç офицерĕн дневникне тупнă. Аяларахра çав дневникăн хăшпĕр вырăнĕсене пичетлетпĕр.

«1942 çулти июнĕн 28-мĕш. Лейтенант Людвиг тата переводчик пĕр вырăса тытса килчĕç. Ку çын колхозăн сторожĕ пулнă. 55 çулхискер. Унăн 7 ача. Çав старик нимĕç салтакĕсене ятлаçнă пулнă. Вырăс çыннине çавăншăн 30 хутчен чăпăрккапа çаптармалла турăмăр. Ялти мĕнпур çынсене чĕнсе пухрăмăр. Салтаксем вырăссен çав çыннине çарамаслантарчĕç те чăпăрккасемпе çаптарчĕç. Çав çын текех ура çине тăраймарĕ. Ăна нӳхрепе кайса пăрахма тата виçĕ кун хушши нимĕнле апат-çимĕç те памасăр тăма хушрăмăр.

Июлĕн 10-мĕш. Халăх выçăпа асапланать. Мĕнпур çимĕçсен запасĕсене вĕсенчен тахçанах туртса илнĕ. Хресченсем курăкран çăкăр пĕçереççĕ. Темĕнле тĕлĕнмелле майпа çеç çăлăнса юлнă чăхсен çăмартисене те вĕсен пире парас пулать.

Августăн 2-мĕш. Çĕрле вырăссем пирĕн район çине вĕçсе килсе сывлăшран питĕ вăйлăн тапăнчĕç. Пирĕн зениткăсем урса кайнă пекех переççĕ, анчах та усси çук. Тепĕр хут малтанхинчен те вăйлăрах тапăнчĕç. Чугунçул станци çине бомбăсем ӳкрĕç. Складсемпе составсем çĕрĕпех çунчĕç».

* * *

Котельниковăран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри участоксенчен пĕринче нимĕçсен фашистла мерзавецĕсем мина хурса тухнă вырăн çине питĕ нумай хресченене хăваласа кĕртсе янă. Минăсем çине пырса кĕнине пула советăн 150 гражданĕ сирпĕнсе кайнă, вĕсем хушшинче хĕрарăмсем нумай пулнă.

* * *

Италин фашистла мерзавецĕсем Югославири Содражица хулине çаратса пĕтерсе çунтарса янă. Итали бандичĕсем çав хулари 1.500 çынна персе вĕлернĕ е тата вутра çунтарса янă. Оккупантсем Люблян-Гросуль районĕнче словенсем пурăнакан ялсене пурне те çунтарса янă.

Августăн 21-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Августăн 21-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç **Клетскаяран** кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри, **Котельниковăран** çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри, çавăн пекех тата **Пятигорскран** кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри тата **Краснодартан** кăнтăртарахри районсенче çапăçусем туса пынă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле улшăнусемех те пулса иртмен.

* * *

Клетская районĕнче Н-ски подразделени наступлени тума хатĕрленекен противника кĕтмен çĕртен атакăланă. Хаяр çапăçура пирĕн боецсем нимĕçсен 5 танкне, 8 противотанковăй орудине, 11 пулеметне, 7 минометне пĕтерсе тăкнă тата 350 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ. Клетскаяран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре противника хирĕç вăйлă çапăçусем пулса пыраççĕ. Пирĕн пĕр чаçăн боецĕсем нимĕçсен мотопехоти танкĕсем пулăшнипе тунă атакăна сирсе янă. Противникăн 8 танкне çĕмĕрнĕ тата унăн пехотин батальонне аркатса тăкнă.

* * *

Котельниковăран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районра пирĕн войскăсем оборонăллă çапăçусем туса пынă. Контратакăсем туса совет чаçĕсем нимĕçсене халран яраççĕ тата пысăк çухатусем тӳстереççĕ. Н-ски часть кĕрешнĕ районра кăна противникăн 3 танк, 9 орудин, 5 автомашина тата 350 салтакпа офицер пĕтнĕ. Разведка тăвакан отряд çĕрле противник вырнаçнă çĕре кĕрсе кайнă. Пирĕн разведчиксем нимĕçсен темиçе танкĕпе автомашинине вут тивертсе янă тата гитлеровецсене 100 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Краснодартан кăнтăртарах районра Аршинцев юлташ командир пулса тăракан соединени виçĕ кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 2.500 çынна ытла, 14 танк, 7 бронемашина, 103 автомашина, орудисемпе пулеметсем нумай пĕтерсе тăкнă. Хисеп тĕлĕшпе йышлăрах тăшмана хирĕç Совет боецĕсем хăйсен пурнăçне шеллемесĕр çапăçаççĕ. Пулеметчиксем Дзилуновпа Пирущак юлташсем нимĕçсен 90 автоматчикне пĕтерсе тăкнă. Батальон командирĕ капитан Бодашвили станковăй пулеметран персе нимĕçсен 6 мотоциклне тата 40 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Бронебой-

Вĕçĕ 2-мĕш страницăра

Совет Информаци Бюровĕнчен

Августăн 21-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

щик старши сержант Катаев противотанковăй гранатăпа пĕл персе нимĕçсен танкне тата пехота ларса пыракан машинăна çĕмĕрнĕ.

Пятигорскран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри районра хаяр çапăçусем пулса пынă, çав çапăçусем вăхăтĕнче противника пысăк çухатусем тÿстернĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнче вырăнти çапăçусем пулса пынă. Участоксенчен пĕринче Свиридов командирăн темиçе подразделенийĕ наступлени тунă. Тăшман вăйлăн хирĕç тăнине сирсе пăрахса, пирĕн боецсем оборона тумалли пахă рубежа йышăнса илнĕ. Нимĕçсен пехотин икĕ батальонĕ хăйсем çухатнă позицие каялла тавăрма хăтланса пăхнă, анчах вĕсен атакине сирсе янă. Икĕ кун хушшинчи çапăçусенче, туллимар даннăйсем тăрăх, нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 2.000 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ. 10 пулемет, 3 миномет пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен танкне çунтарса янă, боеприпассен 2 складне сирпĕнтерсе янă. Пирĕн артиллерирен персе противник артиллерийĕн 7 батарейине чусарса лартнă.

* * *

Германи çарĕн сывлăш-çар вăйĕсен разведка тăвакан отрячĕн тыткăна лекнĕ ефрейторĕ Герберт Риттер çапла каласа панă: «Пирĕн отряд Антверпенран (Бельгия) Российăна кăçалхи июнь уйăхĕнче килчĕ. Пирĕн хыççăн авиацин ытти чаçĕсем те Бельгирен, çавăн пекех Францирен те килчĕç. Разведка туса вĕçнĕ чухне эпĕ совет истребителĕпе тĕл пултăм, çапăçуран пăрăнма хăтланса пăхрăм. Анчах вырăс летчикĕ мана йĕрлесе пырса манăн машинăна персе ÿкерчĕ. Совет летчикĕсем хăйсен ĕçĕн чаплă мастерĕсем пулса тăраççĕ, тесе шутлаççĕ пирĕн турте. Нимĕçсен нумай летчикĕсене вырăс хĕлĕ хăратать. Вĕсен шучĕпе, вырăссен иккĕмĕш хĕлне Германи çарĕ чăтса ирттерейместь. Вăрçă часах пĕтмесен, Германи поражени тÿсет, теççĕ вĕсем».

* * *

Ленинград облаçĕнчи Басино ялĕнче нимĕçсен фашистла мерзавецĕсем Наумова колхозницăна тытса чарнă та ăна партизансем ăçта тăнине кăтартма хушнă. Партизансем ăçта тăнине пĕлместĕп, тесе ответленĕ Наумова. Çакăн хыççăн фашистла палачсем ăна асаплантарма тытăннă. Наумовăран пĕр сăмах та илтеймен пирки, нимĕç ирсĕрĕсем ăна персе пăрахнă.

* * *

Польшăри партизансен отрячĕ, С. районĕнче кĕрешекенскер, 40 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Польша патриочĕсем 6 кĕпере сирпĕнтерсе янă тата нимĕçсен 8 грузовикне пĕтерсе тăкнă.

Кăнтăрта нимĕçсен танкĕсене нумай пĕтереççĕ

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, августăн 20-мĕш. (ТАСС спецкорĕ.). Кăнтăрта нимĕçсене малалла куçса пынин кашни метрĕ питех те хакла ларать, вĕсем пысăк çухатусем тÿсеççĕ, пуринчен ытла вĕсен танкĕсем нумай пĕтеççĕ. Тăшман хăйĕн малалла куçса пыракан чаçĕсем умĕнчен танксем кăларса ярать. Пономарев юлташ командир пулса ертсе пыракан пĕр подразделени кăна икĕ эрне хушшинчи çапăçусенче 90 танк тата 10 бронемашина çунтарса янă е çĕмĕрнĕ.

Кунта тăшман, пирĕн оборонăн малти линине çĕмĕрсе кĕме шут тытса, çапăçăва танксен ушкăнĕсене пĕрин хыççăн теприне пĕр чарăнмасăр кĕртсе тăнă. Танксен атакисем чарăнма пĕлмесĕр пĕрин хыççăн тепри пулса пынă, çапах та фашистсем нимĕнле çитĕнÿсем те тăвайман. Пирĕн артиллеристсем тăшман урса кайса малалла хĕсме хăтланнине пĕр шикленмесĕр сире-сире янă. Кĕçĕн сержантăн Гержанăн расчечĕ 3 кун хушшинче фашистсен 8 машинине пĕтерсе тăкнă.

Тепĕр подразделенири артиллеристсем тăшманăн танкĕсем çине лайăх позицисем çинчен персе тăнă. Вĕсем пирĕн пехотăн боевой речĕсем умĕнчи темиçе рубежра вут чаршавсем карнă. Тăшмана стена пек картласа чарса тăнă. Халăх пурăнакан пĕр пункт çывăхĕнче пĕр çаçа хирĕç нимĕçсем 13 танк кăларса янă. Пирĕннисем вĕсене малтанах персе тĕллесе хунă рубеж патне çитме панă та, батарейăсем вут тăкма пуçланă. Çак çумăр пек тăкăнса тăракан снарядсен стени витĕр 8 танк кăна тухма пултарнă. Малтанах персе тĕллесе хунă иккĕмĕш рубежра артиллеристсем çаксенчен тата 2 танкне çунтарса янă, теприне çĕмĕрнĕ. Виççĕмĕш рубеж урлă мĕнпурĕ те пĕр танк кăна каçса кайма пултарнă, ăна та вара тÿрремĕн тĕллесе персе аркатса тăкнă.

Тăшмана пирĕн танкистсем пысăк çухатусем кÿреççĕ. Танксен çапăçăвĕсенче вĕсем пĕр парăнмасăр, питех те хаяррăн вăрçаççĕ. Тăшман йышлăрах пулин те, пирĕн танкистсем унăн танкĕсене хирĕç çапăçăва кĕрсе кайса юлашки снаряд пĕтиччен вăрçаççĕ, тăшман танкĕсем çине пĕр хăраса тăмасăр хăюллăн таран тума кĕрсе каяççĕ. Н-ски подразделенири танкистсем йывăр çапăçусенче пĕр кун хушшинче нимĕçсен темиçе вунă танкне пĕтерсе тăкнă.

И. ЛАПОНОГОВ.

Клетскаяран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри çапăçусем

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, августăн 20-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Клетскаяран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри районри вăйлă çапăçусем пĕр минутăлăха та чарăнмаççĕ. Нимĕçсем хăйсен атакисене вăйлатаççĕ. Пирĕн боецсем кашни рубежах паттăррăн хÿтĕлесе тăраççĕ.

Пĕр участокра пирĕн чаçсем артиллерирен тата пехота хĕçпăшалĕнчен пĕр вăхăтрах персе тăрса, йышлăрах противникăн темиçе атакине сире-сире янă. Çакăн хыççăн çапăçăва танкистсем кĕрсе кайнă. Танксен пĕр подразделенийĕ хăвăрт пырса çапса противникăн 10 танкне, 12 противотанковăй орудине, 7 автомашинине, 2 тягачне пĕтерсе тăкнă тата пехотăн пĕр батальонне çити вĕлерсе пĕтернĕ.

А. АРНОЛЬДОВ.

Котельниково патĕнчи çапăçусем

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, августăн 20-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Котельниковăран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри участоксенчен пĕринче пирĕн чаçсем противникăн контратакисене сирсе ярса ăна пысăк çухатусем тÿстернĕ. Танксен пĕр подразделенийĕ пехотăпа пĕрле çыхăнса кĕрешсе, пĕр кунхи çапăçусенче, малтанлăха шутласа тухнă тăрăх, тăшманăн 32 танкне, 2 противотанковăй орудине, 2 пулеметне, 6 стволлă икĕ пулеметне, 8 станковăй пулеметне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн боецсем противникран автоматсем, винтовкăсем, боеприпассем тытса илнĕ.

НОМЕР ÇАКНĂ ЧУРАСЕМ

Гвардеецсем ман пата икĕ бирка ярса пачĕç. Темиçе яла нимĕçсенчен ирĕке кăларнă хыççăн, гвардеецсем колхозниксемпе колхозницăсем çинче номер çырнă йывăç татăккисене курнă. Хăйсем тытса илнĕ вырăнта пурăнакан кашни çынна нимĕçсем выльăха панă пек бирка параççĕ. Çыннăн текех ячĕ çук. Çыннăн номер кăна. Нимĕçсен кĕтĕвĕнчи номер. Нимĕçсен каторгинчи номер.

Новая ялĕнчи старик, «Красный пахарь» колхозри хĕрача нимĕçсем патĕнче номерсем пулса тăнă.

«Вырăс çынни хăйĕн кăкăрĕ çине ăна палласа илмелли номере çакмасăр тухать пулсан, ăна партизан вырăнне хурса çакса вĕлермелле»—çакăн пек нимĕçсен влаçĕн приказĕ.

Вилĕмрен те йÿçĕрех япала пур, вăл—мăшкăл. Вилĕмрен те хăрушăрах япала пур, вăл—чуралăх. Хресченсем, столярсем, инженерсем, учительсем пулнă. Вĕсен кашнин хăйĕн кунçулĕ, хăйĕн килĕ, хăйĕн пурнăçĕ пулнă. Нимĕçсем патĕнче вĕсем пурте—номер çакнă чурасем. Нимĕç этемсен ятне те хăварман, списока çырнă та номер лартнă, вара çапла приказ панă: «кăкăр çинче çакса çÿре».

Нихăçан та, нихăçан та эпир нимĕçсен чурисем пулмастпăр! Пирĕн кăкăр çинче çар билечĕ тата тăван çĕршывран илнĕ çыру. Пирĕн кăкăрта курайманлăх. Вăл кăмрăк пекех çунтарать.

Сан умра номер паракан нимĕç. Нимĕçĕн кăкăрĕ йывăç татăккине мар, тăхлана кĕтет.

Илья ЭРЕНБУРГ.

(«Красная Звезда» хаçатран).

ЗООТЕХНИКСЕНЕ ВЕТЕРИНАРИ ĔÇНЕ ВĔРЕНТЕÇÇĔ

Выльăх-чĕрлĕхе пăхса ÿстерес ĕçре ĕçлекен зоотехниксен янанах практикăра ветеринари ыйтăвĕсемпе тĕл пулма тивет. Çавăнпа та зоотехниксем ветеринарине пĕлмелли кирлĕ.

Çакна шута илсе, Аслă шкул ĕçĕсен Пĕтĕм Союзри Комитечĕпе СССР Наркомземĕ йышăннă тăрăх, кăçал ялхуçалăх тата ветеринари институчĕсен 1-мĕш курсĕсенчи студентсене пурне те ветеринари ĕçне вĕрентмелле тунă.

Ялхуçалăх институтĕнчен вĕренсе тухакан зоотехниксен ветеринари енĕпе ветфельдшер чухлĕ пĕлмелле.

Ют çĕршывсенче

У. Черчилль И. В. Сталинпа калаçни çинчен Англипе Америкăра мĕн çыраççĕ

ЛОНДОН, августăн 19-мĕш. (ТАСС). Великобританин премьер-министрĕ У. Черчилль СССР Совнаркомĕн председателĕпе И. В. Сталинпа калаçни çинчен Англири хаçатсем халĕ те нумай çыраççĕ. Çак калаçусен итогĕсем çинчен хаçатсем умстатьясем тата хăйсен дипломатиллĕ обозревателĕсен статьисене пичетлеççĕ, курăнмалла вырăнсенче Сталинăн, Черчиллĕн тата Гарриманăн ÿкерчĕкĕсене кĕртеççĕ.

«Дейли геральд» хаçат Мускаври калаçусем çинчен çырнă умстатьяра çав калаçусене саламлать, вăл калаçусем союзлă çĕршывсен стратегине пĕрлештерес тĕлĕшпе утăм туни пулса тăраççĕ, тесе хаклать. Хаçат çапла кăтартса парать: «çак енĕпе кулленех ĕçлесе пыни кирлĕ, союзниксем хушшинчи туслăха аталантарса тата лайăхлатса пымалла», тет.

Англин информаци министерстви Мускаври калаçусен итогĕсем çинчен çырнă статьясемпе пĕрле хăйĕн пĕлтерĕвне пичетлет, унта çапла калать: «Черчилльпе Гарриман Мускавра пулнине Англире союзниксен стратегине пĕрлештерес тĕлĕшпе тунă пысăк утăм вырăнне хурса хаклаççĕ», тет.

Мускаври калаçусем радио тăрăх тухса калакансен сăмахĕсенче те тĕп вырăн йышăнса тăраççĕ.

НЬЮ-ИОРК, августăн 19-мĕш. (ТАСС). Америкăри хаçатсем У. Черчилльпе И. В. Сталин калаçни çинчен уйрăмăнах нумай çыраççĕ. Калаçусем çинчен Англипе Совет Союзĕ панă коммюникене хаçатсем пысăк заголовоксемпе тата курăнмалла вырăнта пичетлесе кăларнă. Хаçатсем калаçу çинчен пысăк коментарисем параççĕ.

«Нью-Йорк таймс» хаçат çапла çырать: «Мускаври калаçусенче мĕнле решенисем йышăннине вăхăт кăна кăтартса парĕ. Анчах çав решенисем кирек мĕнле пулсан та, вĕсем Совет правительствипе Англи тата Америка правительстви пĕр-пĕрне ăнланса туслăн çыхăнса тăнине çĕнĕрен кăтартса параççĕ». Калаçусенче Америкăн официальнăй представителĕ пулни «США калаçусемпе питех те интересленнине» кăтартса парать.

«Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат Мускаври калаçусене питех те паха событи вырăнне хурса хаклать. Калаçусем,—тет хаçат,—«виçĕ аслă çĕршывăн руководителĕсем пĕр-пĕрне ăнланни çинчен, вĕсем хăйсен политикине пĕр-пĕринпе килĕштерсе туса пыни çинчен тепĕр хут шанчăклăн кăтартса парать».

„Хĕвеланăçĕнчен пырса çапас вăхăта вăраха яма юрамасть“

Европăра иккĕмĕш фронт тăвассине хăвăртлатас тĕлĕшпе Америкăра пулса пыракан движени

НЬЮ-ИОРК, августăн 20-мĕш. (ТАСС). Америкăри общественноçăн анлă сийĕсем Европăра иккĕмĕш фронт тăвассине хăвăртлатма çаплах ыйтаççĕ. Тĕрлĕ организацисем питĕ нумай резолюцисем ярса тăраççĕ, çав резолюцисенче союзниксен войскисене Европа континенчĕ çине халех кĕртсе яма кирлине палăртаççĕ. Америкăри общественноçăн çак шухăш-кăмăлне нумаях пулмасть ирттернĕ ыйтусемпе ответсем кăтартса параççĕ, çакăн чухне Америкăри суйлавçăсем нумайĕшĕ халех активлă кĕрешÿ пуçласа яма, иккĕмĕш фронта уçма ыйтнă.

Моряксен профсоюзĕ Европăра иккĕмĕш фронт уçас ĕçе хăвăртлатас тĕлĕшпе кампани ирттернĕ май, Новый Орлеан (Америкăри чи пысăк портсенчен пĕри) хулин мерĕ Мэстри августăн 20-мĕшне «иккĕмĕш фронтшăн пыракан кампанин кунĕ», тесе пĕлтернĕ. Мэстри халăха чĕнсе каланă, «Европăра иккĕмĕш фронт уçни пысăк вырăн йышăнса тăнине государство лидерĕсем йышăнччăр» тесе августăн 20-мĕшĕнче татах та вăйлăнрах тăрăшма чĕннĕ вăл.

Нью-Джерси штатĕнчи пысăк хуласенчен пĕринче Паттерсонра (пир-авăр тата радио промышленноçĕн центрĕ) профсоюз организацисен 35 руководителĕ «Ньюс» хаçатра Америка президенчĕ Рузвельт патне çырнă пысăк çырăва пичетлесе кăларнă. Çав çырура вĕсем Америкăпа Великобритани тата СССР хушшинче 1942 çулта Европăра иккĕмĕш фронт тăвас тĕлĕшпе калаçса татăлнине рабочисем халех пурнăçа кĕртме ыйтаççĕ, тесе çырнă.

Цинцинати хулинчи (Огайо штачĕ) профсоюз организацисен 100 руководителĕ Рузвельт патне телеграмма янă, çав телеграммăра вĕсем хăйсем иккĕмĕш фронта халех уçассишĕн тăни çинчен калаççĕ.

Çĕршывра тĕрлĕ организацисен митингĕсемпе конференцийĕсем пулса иртеççĕ, вĕсем Европăра иккĕмĕш фронта хăвăртрах уçас лозунгпа иртеççĕ.

Столицăри тата провинцисенчи нумай хаçатсем Европа континентĕнче союзлă çĕршывсен войскисен наступленине халех организацилеме кирлĕ тесе çыраççĕ.

Рутлонд (Вермонт штачĕ) хулинче тухакан «Геральд» хаçат çапла çырать: «Англипе Америкăри обществăллă шухăш иккĕмĕш фронта уçма ыйтать. Англипе Америкăри çар руководителĕсем йывăр решени йышăнас вăхăт умĕнче тăраççĕ. Анчах та хĕвеланăçĕнчен пырса çапассине малалла та вăраха ярса пыма юрамасть», тет хаçат.

Дьепп районне пырса тапăннă войскăсем Англие тавăрăнни

ЛОНДОН, августăн 20-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Дьепп районне кайнă юлашки отрядсем августăн 20-мĕшĕнче ирхине моторлă баржăсемпе ытти суднăсем çинчен Англин кăнтăр енчи çыранне аннă. Вĕсем хăйсемпе пĕрле нимĕçсене тыткăна илсе килнĕ.

ЛОНДОН, августăн 20-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин обозревателĕ çапла пĕлтерет: Дьепп районне кайса тапăннă май, августăн 19-мĕшĕнче кунĕпех Ла-Манш çинче тата Хĕвеланăç Европăра сывлăшра питĕ вăйлă çапăçусем пулса иртнĕ. Англин истребителĕсемпе бомбардировщикĕсен тĕп задачи—çĕр çинчи войскăсене сывлăшран пулăшасси пулнă. Юлашки вăхăтра илнĕ пĕлтерÿсем тăрăх, союзниксен авиацийĕ 98 самолет çухатнă, тĕнĕл держависен 91 самолет пĕтнĕ тата 100 машинăна ытла пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ.

Дьепп районне кайса килни çинчен çырса, «Таймс» хаçат умстатьяра çакна паллă тăвать: çак операцире тĕрлĕ войскăсем пĕрлешсе кĕрешмелли майсене тĕрĕслесе пăхнă. Дьепп районĕнче хăшпĕр сооруженисем пулнă пулмалла, вĕсене çĕмĕрнĕ пулĕ. Хаçат палăртнă тăрăх, Дьепп районне кайса килни вăл—опыт пулса тăрать.

Бразилин виçĕ пароходне путарнă пирки Бразили правительстви калани

НЬЮ-ИОРК, августăн 19-мĕш. (ТАСС). Тĕнĕл держависен подводнăй лодки Бразили çыранĕ çывăхĕнче Бразилин виçĕ пароходне путарнă, çав пароходсен водоизмещенийĕ 11.000 тонна ытла. Бразилин 700 салтакран кая мар пĕтнĕ.

Çакăн пирки Бразили правительстви заявлени пичетлесе кăларнă, унта вăл çапла каланă: «Тĕнĕл держависем хÿтĕлĕхсĕр суту-илÿ суднисем çине намăса пĕлмесĕр тапăнни тĕнчери чи элементарнăй правăсене пăсни пулса тăрать. Пирĕн çĕршыв, хăйĕн йăлисене тытса пырса, çавăн пек тискерлĕхрен хăраса каялла чакмĕ. Правительство халь кирлĕ мерăсем йышăнас ыйтăва пăхса тухать. Халăхăн лăпкă тăмалла, çав преступленисем вĕсем хирĕç тавăрмасăр иртсе каймĕç тесе шанса тăмалла», тенĕ.

Правительствăн çав заявленине пичетлесе кăларнă хыççăн Бразилин тата икĕ пароходне путарни çинчен хыпар çитнĕ. Вăл пароходсене тĕнĕл держависен подводнăй лодкисем Сан—Сальвадор районĕнче торпедăсем ярса путарнă. Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Бразилия çитес кунсенче тĕнĕл держависене хирĕç вăрçă пуçласси çинчен пĕлтерĕ тесе кĕтсе тăраççĕ.

Индири лару-тăру

ЛОНДОН, августăн 18-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Конгресăн оппозицилле лидерĕ Раджагопалачария Муссульмансен Лигин пуçлăхне Джиннăна Индин конституци ыйтăвне Конгреспа пĕрле татса парас ĕçе хутшăнма чĕннĕ. Раджагопалачария шухăшĕпе, Индире вăхăтлăх правительство тума пулать те, тумалла та, вăл правительство вара пĕтĕм наци ячĕпе ĕçлĕ.

Раджагопалачария тăратакан резолюцие Муссульмансен Лигин исполкомĕн бюровĕ хăйĕн тепĕр ларăвĕнче пăхса тухать.

НЬЮ-ЙОРК, августăн 18-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Джинна çапла каланă: эпĕ мĕнпур партисен ушкăнĕсем, çав шутра Конгресс та пулăшнипе, хаваслăнах вăхăтлăх правительство туса хунă пулăттăм, тенĕ.

НЬЮ-ЙОРК, августăн 20-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин Бомбейри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, центральнăй провинцисенче пăлхавсем çаплах пыраççĕ-ха. Чимурта демонстрантсем полици офицерне вĕлернĕ. Рамчепре урама пухăннă халăх полици участокне тата правительствăн темиçе çуртне аркатса тăкнă.

Ассошиэйтед пресс агентствин Бомбейри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Лакнаура бомба пăрахнă, унăн ванчăкĕсем пĕр полицейскине тата темиçе демонстранта амантнă. Нагпурта августăн 12-мĕшпе 15-мĕш числисем хушшинче войскăсемпе полици 32 çынна вĕлернĕ, 22 çынна амантнă.

ЛОНДОН, августăн 20-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви Делирен пĕлтернĕ тăрăх, Ганди ывăлне Девадас Гандие арестленĕ. Вăл «Хиндустан таймс» хаçатăн директорĕ пулса ĕçленĕ. Вăл конгресс ĕçĕсем çинчен, çавăн пекех тата хальхи пăлхавсем çинчен, влаçсене хирĕçле пыракан ĕçсем çинчен хаçат-журналсем çинче çырса пĕлтерме чаракан постановление пăхăнмасăр ăна пăсса ĕçленĕ.

Махоркăна вăхăтра касса пухмалла

Чăваш республикинчи колхозсенче махорка пăхса ÿстерес ĕçре иртнĕ çулсенче çитменлĕхсем пулкаларĕç. Çав çитменлĕхсенчен паллăраххи вăл—касас вăхăта кая хăварни, каснă чухне аврине тăрăхла çурманни пулса тăрать.

Махоркăна лайăх пухса кĕрсе промышленность валли пысăк пахалăхлă чĕртавар парас тесен, агротехникăн требованийĕсене пăхăнас пулать. Махорка ĕлкĕрсе çитиччĕнех касма юрăхлă пек курăнать. Анчах çулçăсене тĕттĕм-сарă тĕс çапсан, çулçăсем алă çумне çыпăçакан пулсан, çулçăсем йывăрланса çĕрелле усăнсан, çулçă хĕррине варринелле авăнса тăрсан, табакран йывăр шăршă кĕрекен пулсан çеç табака касма юрăхлă вăхăт çитет. Кăтартнă паллăсем палăриччен е пулса иртнĕ хыççăн касни махорка пахалăхне чакарать.

Касас умĕн 6—7 кун малтан табака аврине çĕр çумĕнчен 3—4 сантиметр хăварса тăрăхла çурса тухмалла. Çак 6—7 кун хыççăн вара касма юрать. Касса хĕвеллĕ кун ирхи сывлăм шывĕ типнĕ хыççăн тымарĕ çумĕнченех касмалла. Касса тăкнă хыççăн 4—5 сехет вырттарса шантарас пулать, анчах çĕрле çумăр е сывлăм шывĕсем йĕпетесрен сарайне кÿртсе хумалла. Махоркăна чи кĕске вăхăтра касмалла.

Типĕтес умĕн пысăк мар купасем туса е пĕр-пĕр ещĕксем çине хумалла, ун вырăнне 60—70 сантиметр çÿллĕш йĕркесем тума та юрать. Çав йĕркесен сарлакăшĕ табакăн çÿллĕшĕнчен икĕ хут пысăкрах пулмалла. Каснă табака тăррине купа варринелле туса купаламалла, пĕр аврти çулçăсем тепĕр авăр çулçине хупласа выртчăр. Каснă хыççăн икĕ кунран пĕчĕк çыхăсем туса 125 сантиметр вăрăмăш, 2,5 сантиметр хулăмăш каштасем туса типĕтмелли сарайне çакмалла. Вăл сарайне сывлăш лайăх кĕрсе тăтăр, унсăрăн табак çĕрсе кайма пултарать. Хĕвел çинче типĕтме юрамасть, мĕншĕн тесен махорка хăйĕн пахалăхне çухатать. Типсе çитнине çапла пĕлме пулать: çулçă туни авса пăхсан пружина пек тапать, ун çинчи çÿхе хупă типнипе татăлать. Табак аврин шурă тĕслĕ варри авăнса тăракан çиелти пайĕ çумне çыпăçать.

Типĕтнĕ чухне кăвакарасран, çĕрессрен сыхлас пулать. Çĕрнĕ е кăвакарнă табака çийĕнчех илсе пăрахмалла. Çĕрмен, кăвакарман табака урăх вырăна сиктермелле. Лайăх çанталăк тăнă чухне икĕ эрне хушши типĕтмелле. Çумăрлă çанталăкра нумайрах вăхăт, 4—5 эрне хушши типĕтмелле. Анчах та типĕтессине хăвăртлатма çапла тума пулать: типсе çитмен, 40—45 процент чухлĕ нÿрĕ тытакан табака кашта çинчен илсе урайне 1,5 метр çÿллĕш, икĕ табак аврин тăршшĕ чухлĕ сарлакăш купа тумалла. Ку купара махорка хĕрме пуçлать. Унти ăшă 40—50 градуса çитсен, купан тул енчи табакне варринелле, варринчине вĕсен вырăнне куçарса хумалла. Çакна вара 3—4 хутчен, махорка хĕрме пăрахиччен тумалла. Çав вăхăтра табак туртма юрăхлă пахалăх пухать. Çулçăсем тĕттĕм-кĕрен тĕслĕ пулса тăраççĕ, аври тĕттĕм-симĕс е хăмăр сăнлă пулса тăрать. Унсăр пуçне тата табак аври çирĕпленсе юлать, мĕнпур типсе çитнĕ табак çемçелсе юлать. Çак вăхăтра сортласа хурсан табак тăккаланасси сахалланать.

Хими промышленноçне каякан махоркăна купа тума кирлĕ мар. Ăна уйран тиесе килнĕ хыççăн пĕчĕк çыхăсем туса типĕтмелле. Типĕтессе хăвăрт типĕтмелле. Хуллен типĕтни никотина сахаллатать.

Л. А. ПЕЛЬЦИХ.

Чăвашсен ялхуçалăх институчĕн профессорĕ.

СОВЕТ СОЮЗĔ ТĂРĂХ

Государство заемĕсен тиражĕсем пулса иртнĕ

Августăн 20-мĕшĕнче Мускавра 3-мĕш пятилетка заемĕн (пĕрремĕш çулхи кăларăмĕн) 15-мĕш тиражĕ тата 3-мĕш пятилетка заемĕн (иккĕмĕш çулхи кăларăмĕн) 11-мĕш тиражĕ пулса иртнĕ.

3-мĕш пятилетка заемĕн (пĕрремĕш çулхи кăларăмĕн) тиражĕнче пĕтĕмпе 518.500 выигрыш 83.240.600 тенкĕлĕх пулнă.

3-мĕш пятилетка заемĕн (иккĕмĕш çулхи кăларăмĕн) тиражĕнче пĕтĕмпе 680.800 выигрыш 108.380.400 тенкĕлĕх пулнă. (ТАСС).

КĔРХИ ТЫРĂСЕНЕ ПЛАНРАН ИРТТЕРСЕ АКСА ХĂВАРАÇÇĔ

Новосибирск облаçĕнче кăçал пур районсем те кĕрхи тырăсем акмалли çĕр лаптăкне планпа кăтартса панинчен нумай аслăлатнă. Черепановски районра пĕлтĕр ыраш 18 пин гектар акнă пулнă, кăçал унта ыраш акмалли çĕр лаптăкĕ 30 пин гектар ытла йышăнать.

Новосибирски районри колхозсем малтанхи план тăрăх ыраш 4.200 гектар акмалла пулнă, унта çав лаптăка 5.500 гектар таран аслăлатнă, халĕ кĕрхи тырăсем акмалли çĕр лаптăкне 8 пин гектара çитернĕ; вăл пĕлтĕрхинчен 2 хута яхăн ытларах пулать.

(ТАСС).

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли—ăшă тумтирсем

ОКТЯБРЬСКОЕ. Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухма июнĕн 15-мĕшĕнче çĕнĕрен тытăннăччĕ. Унтанпа пирĕн районри ĕçсыннисем ăшă тумтирсем çĕлетме 1.464 тир, 234 килограмм çăм, кунсăр пуçне 54 çăматă, 117 мăшăр алшиш, 86 мăшăр тир алса, 65 мăшăр портянка, 64 мулаххай, 2 ăшă шаровар, 5 минтер пичĕ, 3 простыня, 146 алшăлли, 248 метр килти пир, 1 мăшăр сăран ată, красноармеец шлемĕсем 4 пачĕç.

Караньялĕнчи «Труд» промысла артелĕн членĕсем çак кунсенче 25 мăшăр çăм носки пачĕç. Ăшă тумтирсем пухакан комисси председателĕ Мокеев юлташ тăрăшса ĕçлет.

Çавăнпа пĕрлех, юлашки вăхăтра ăшă тумтирсем пухас ĕç районра вăйсăрланчĕ. Августăн 1-мĕшпе августăн 15-мĕш хушшинче районри склада пĕтĕмпе те 14 тир, 55 мăшăр çăматă, 1 килограмм çăм, 1 мăшăр портянка, 1 алшăлли, 1 мулаххай, 3 простыня кăна пырса панă. Ку ĕç начарланнин сăлтавĕ—ялсенчи комиссисем хăйсен ĕçне тăтăшах туса пыманнинче. Вĕсен çак çитменлĕхе пĕтерес пулать, ăшă тумтирсем пухас ĕçе пĕрмаях туса пымалла. Хĕл çывхарать, унччен Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем хатĕрлесе парас пулать.

К. АЛЕКСЕЕВ.

Октябрьски районри ăшă тумтирсем пухас енĕпе ĕçлекен комиссин председателĕ.

Ачасене вĕрентме хатĕрленнĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. (Телефонпа). Пуçламĕш шкулсене пурне те юсаттарнă, вĕсене валли учительсем çителĕклĕ. Шкулсем вĕренекенсене учебниксем туянма пулăшнă.

Районри шкулсене валли пĕтĕмпе 5.615 кубометр вутă кирлĕ пулсан, 4.755 кубометр касса хатĕрленĕ, 1.155 кубометр турттарса хунă. Ĕнелти туллимар вăтам шкулăн директорĕ Т. Миронова юлташ шкул валли кирлĕ вутта турттарса хунă. Урмас ялĕнчи туллимар вăтам шкулăн директорĕ А. Павлова юлташ шкул валли вутă 175 кубометр турттарса хатĕрленĕ.

Аслă Çĕрпÿел ялсоветĕнчи Шăхасанри пуçламĕш шкула хĕллене валли 45 кубометр вутă кирлĕ. Шкул заведующийĕ Е. Пушкина юлташ тăрăшнипе çав вутта пĕтĕмпех турттарса хатĕрленĕ.

Ю. КОНОВАЛОВА.

Районри çутĕç пайĕн заведующийĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ГОСУЧРЕЖДЕНИЮ ТРЕБУЮТСЯ НА ПОСТОЯННУЮ РАБОТУ:

Инженеры-строители, техники-строители, десятники, ответ. исполнители, зав. складами, кладовщики, плотники, бетонщики, каменщики, зав. хозяйством, арматурщики, слесари, автослесари, монтеры, разнорабочие, шоферы, маляры, штукатуры, секретарь-машинистка, кровельщики.

Обеспечиваются общежитием, обедом и ужином.

Обращаться по адресу: гор. Чебоксары, ул. Володарского, д. № 5. (Дом печати), 2-й этаж, ком. 15, отдел кадров.

Всесоюзному тресту срочно требуются для работы в городах (Чебоксары, Сарапуль, Москва и другие) знакомые с учетом строительных работ—главные бухгалтера, заместители главных бухгалтеров и бухгалтера-ревизоры. Обращаться по адресу: гор. Чебоксары, Дом печати, 4 этаж, комн. № 44 к Главному бухгалтеру Треста. 2—2.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 6, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропогандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1356 Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.